пьесăн спектакльне куртăр. Ăна эпĕ 18 çулта чухне çырнă. Пурнăç ыйтăвĕ, пьесине те хамăрăнах çырмалла, сцена çинче те хамăрăнах выляммалла пулнă. Яланах тăван халăхпа пĕрле пулма тăрăшрăм. Республикăран тухса каймарăм. Ачамсемпе, мăнукăмсемпе мухтанма пултаратăп. Пурте ĕçчен çынсем пулчĕç. Халăха чир-чĕртен сыватас, сыхласа хăварас тесе тăрăшса ĕçлени çинчен каласа пама сăмах та çитес çук. Яланах тăван культурăна çĕклес тесе пĕтĕм вăй-хала парса ĕçлерĕм. Унтан ырри, лайăххи мĕскер пултăр тата... Халăхшăн пĕрле тăрăшса ĕçлер, — терĕ вăл.



Сăн ўкерчĕкре: П. Н. Осипов (сулахайран иккĕмĕшĕ) чăваш çыравçисем хушшинче.

Пĕррехинче çывăх юлташăмпа, РСФСР халăх артисчĕпе, Филипп Миронович Лукин композиторпа П. Н. Осипова аса илсе калаçса лартăмăр.

— Эпĕ Петр Николаевича 1928 çултанпа пĕлетĕп. Тĕлĕнмелле çынччĕ вăл. Пире, композиторсене, музыкантсене çав тери хисеплетчĕ. Вăл хăй те музыкăна чун-чĕререн юрататчĕ. Шупашкарти музыка шкулĕнче студентсене сĕрме купăс калама вĕрентетчĕ. Концертсене хавхалансах хутшăнатчĕ. Çынсене хăйĕн пултарулăхĕпе, сĕрме купăсĕпе савăнтаратчĕ, — терĕ Филипп Миронович. — Час-часах унпа пĕрле Кăкшăмри кану çуртĕнче пулаттăмăр. Унта вăл вăрманта кăмпана çўреме юрататчĕ. Кăмпаран нихăçан та пушă алăпа таврăнмастчĕ.

Аса килнĕ чух çакна та каласа хăварам-ха. Петр Николаевич Осипова кая юлса, 85 çула çитсен пулас, халăх писателĕн хисеплĕ ятне пачĕç. Ку начар япала! Çак ята чылай малтан, çамрăкрах чухне, илме тивĕçлĕ пулнă...

1982 çулхи нарăс уйăхĕн 10-мĕшĕнче ирхине радиопа П. Н. Осипов сасси илтĕнсе кайрĕ. Писатель «Элкей тавращĕ» романĕнчен илнĕ пĕр сыпăка вулать иккен. Эпир Марье мăшăрăмпа иксĕмĕр те шалт тĕлĕнсе итлетпĕр, «ха, Петĕр пиччемĕр çамрăк çын пек вулать, маттур, ватăлмасть иккен, сасси уçă, илемлĕ», тесе ларатпăр. Передача вĕçленсен тўрех Петр Николаевич патне шăнкăравларăмăр, радиопа вăл хăй произведенине хавхаланса вулани кăмăла кайни çинчен пĕлтертĕмĕр. Писатель савăнчĕ. «Мана итлени шĕн сире тавах! Вăхăтăр пулсан пирĕн пата килсе кайма май тупаймăр-ши?» — терĕ. Эпир килĕшрĕмĕр.

Эпир Осиповсен хваттерĕнче. Петр Николаевич сĕтел çине хăйĕн пурнăçне, кунçулне кăтартакан фото коллекцийĕсене кăлара-кăлара хучĕ. Вĕсенче тĕлĕнмелле хаклă сăн ўкерчĕксем упранса юлнă.

— Сăн ўкерчĕксене çухатма юрамасть. Сыхласа хăвармалла. Акă, çак альбомсене пăхса тухнă чухне мана хам произведенисене вуланăн туйăнать, — терĕ Петр Николаевич. Вăл пире хăйĕн пурнăçĕ çинчен кала-кала пачĕ. — Эпĕ Куславкка районĕнчи Кутемерте хресчен кил-йышĕнче çуралнă, — терĕ, — ялти шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Хусанти арçынсен гимназине кĕнĕ, 1918 çулта Хусанти университетăн медицина факультетĕнче вĕренме пуçларăм. Хусана шурă гвардеецсем тапăнсан, Хĕрлĕ Çар ретне тăтăм. Шуррисене Хусантан кăларса янă хыççăн «Чухăнсен сасси» хаçат редакцийĕнче литература сотрудникĕ пулса ĕçлерĕм, каярахпа, И. Максимов-Кошкинский чĕннипе, Хусанта çуралнă Чăваш театрĕнче артистра ĕçлеме пуçларăм. Артист тенĕрен хамăн пултарулăха Чăвашкино кăларнă «Хура юпа» кинора та кăтартма тăрăшрăм. Унта Тевлет революцнонер рольне вылярăм. Хам ĕмĕрте çирĕм ытла пьеса çыртăм. Хусанта вĕреннĕ чухнех Ф. Шиллерăн «Хаярлăхпа юрату» трагедине, Тамайо-и Баусăн «Мĕскĕн Йорик» драмине, А. Толстойăн «Усал сывлăш» комедине чăвашла куçартăм. Нумай-нумай çулсем хушши тухтăрта ĕçлерĕм. Çапла ĕмĕрĕм иртсе кайрĕ темелле. Темле йывăр çулсенче те пурнăçра шанчăка çухатмарăм. Шухăшăмпа, ĕмĕтĕмпе, ĕçĕм-хĕлĕмпе яланах малалла туртăнтăм, — терĕ.

Петр Николаевич «Шуршăл тăхлачи» музыкăллă комеди либреттине хăй мĕнле çырнине аса илчĕ. — Музыкине пирĕн пултаруллă, ĕçчен композитор Анисим Асламас кĕвĕлерĕ. Тавах ăна уншăн! Сана та, Васлей тусăм, тав сăмахĕ калассăм килет. Комедири хорсемпе арисен сăввисене эсĕ çырса патăн. Унти Надя юрри мĕнле илемлĕн янăрать, — терĕ вăл. Калаçсаларнă хушăра иксĕмĕр те Надя юррине ĕнерме пуçларăмăр:

Чупрăм-тухрăм эпĕ кўлĕ хĕррине,
Çамрăк сăнăм ўкрĕ шыв çине.
Çулăм хыпрĕ манăн çамрăк
чĕрене,
Эп çухатрăм, ай, çухатрăм чунăм
савнине...

Эпĕ Петр Николаевич юрланинчен тĕлĕнсе лартăм. Сасси уçă. Илемлĕн янăрать.

Чылайччен калаçрăмăр. Драматург хăй «Ылханлă йăх», «Икĕ качча пĕр шухăш», «Çĕнĕ хум», «Ĕмĕр сакки сарлака», «Куллен хи симфони», «Кăкламан тымарсем» пьесисене çырнă чух мĕнле ĕçлени çинчен кĕскен кала-кала пачĕ.

— Пĕр пьеса та тертсĕр çуралман. Суя критиксен сăмахĕсене те чăтрăм, тўсрĕм. Пуçа усмарăм, хамăн юратнă ĕçе пăрахмарăм, — терĕ.

1985 çулхи кăрлачăн 26-мĕшĕнче ирех эпир Валерий Туркай, Борис Чиндыков çамрăк писательсемпе пĕрле П. Н. Осипов хваттерне кайрăмăр. Писатель çуралнии 85 çул тултарнине пăллă тăвас терĕмĕр.

Петр Николаевич савăнчĕ. Пире сĕтел хушшине, кĕрекене ларма чĕнчĕ. Эпир пĕрин хыççăн тепри ватă писателе пĕтĕм чун-чĕререн саламларăмăр. Ырă, чунтан тухакан сăмахсем ватă писателе шухăша ячĕç пулас: Петр Николаевич куçĕнчен куççуль пĕрчисем юха-юха анчĕç.

— Çапла пĕрле тĕл пулнă чухне сăн ўкерттерсе юлма май пулмĕши? — терĕ Петр Николаевич.

— Тĕрĕс шухăш. Асăнмалăх ўкерттермеллех, — терĕмĕр эпир те. Виталий Исаев фотокорреспондента чĕнсе илтĕмĕр, Иван Яковлевич Яковлев палăкĕ умĕнче Петр Николаевичпа пĕрле сăн ўкерттертĕмĕр.

1986 çулхи чўк уйăхĕн 8-мĕшĕ. Ман пата хăнана ĕçри тусăмсем: Николай Дедушкинпа Петĕр Чичканов писательсем килчĕç. Уяв кĕрекинче шăкăл-шăкăл калаçса ларнă хушăра эпир хамăрăн юратнă çыннăмăр, халăх писателĕ Петр Николаевич Осипов патне кайса курас терĕмĕр. Ун ячĕпе çакăн пек пĕчĕк çеç саламлă çыру çыртăмăр.

«Хисеплĕ Петр Николаевич! Петĕр пиччемĕр! Эсир — Октябрь салтакĕ, çĕнĕ саманашăн тăрăшнă, çĕнĕ пурнăç сăпкине сиктернĕ, çĕнĕ пурнăç тытăмне çирĕплетессишĕн ырми-канми кĕрешнĕ. Сире чăваш халăхĕ хăйĕн тухтăрĕ тесе, хăйĕн писателĕ, хăйĕн шанчăклă ывăлĕ тесе хисеплет.

Эпир те, санăн тус-юлташусем, Октябрь 69 çул тултарнă май, сана мĕнпур çыравçă ячĕпе хăвăр пата килсех саламлас, ырă сунас терĕмĕр.

Чыс та хисеп пултăр сана, аслă пиччемĕр!» — терĕмĕр.

Кил хуçи чирлĕ, вырăнпах выртать. Пире курсан, вăл аран-аран тăрса ларчĕ. Калаçу пуçланчĕ. Мĕн тăвас тен, пурнăç çавăн пек çав ĕнтĕ: ĕмĕр пĕрле пурăннă Петĕр пиччемĕр пире те палласа илеймест. Чир, ватлăх çынна пĕтерет иккен.

— Ку, Петр Николаевич, сан çывăх юлташусенчен пĕри, Николай Степанович Дедушкин, — тетĕп эпĕ.

Петр Николаевич пăртак шухăшласа илчĕ те:

— Николай Степанович пулчĕ-и-ха? — терĕ.

Çапла пĕрерĕн-пĕрерĕн тин тĕл пулнă çынсем пек паллашрăмăр. Пурте шухăша кайса лартăмăр.

1987 çулхи пуш уйăхĕн 18-мĕшĕ. Тăван халăхăмăршăн çав тери йывăр кун пулчĕ. Петр Николаевич Осиповăн чĕри тапма пăрахрĕ. Ним тума та çук. Йывăр хуйхă. Эпир ăна юлашки çула ăсатнă чух ун тăпри умĕнче тупа турăмăр. Хамăр тăван халăхăмăршăн, унăн малашлăхĕшĕн Петр Николаевич пек пĕтĕм вăй-хала парса ĕçлеме пултăмăр.

П. Н. Осипов çуралнии 90 çул тултарнă кунсенче, 1990 çулхи кăрлачăн 27-мĕшĕнче, Шупашкарти Бондарев урамĕнчи 15-мĕш çурт çинче асăну хăми уçрĕç. Чăваш АССР писателĕсен союзĕн председателĕ П. В. Афанасьев «Айтарпа» «Кушар» драмăсен, «Элкей тавращĕ» романпа ытти нумай произведенисен авторĕн пурнăçĕпе ĕçĕхĕлĕ çинчен каласа пачĕ.

П. Н. Осиповпа пĕрле ĕçленĕ писательсем, врачсем, ăна лайăх пĕлнĕ артистсем, тăванĕсем ырă, ăшă сăмахсем каларĕç. Чăваш халăх писателĕ Н. Т. Терентьев, Чăваш АССР сывлăха сыхлас ĕç министрĕ Н. Г. Григорьев, Н. С. Дедушкин, Г. Я. Хлебников критик-литературоведсем, Чăваш АССР халăх артисчĕ Н. Д. Григорьев, Ф. Е. Уяр писатель, Петр Николаевичăн ывăлĕ — В. П. Осипов ученăй нумай ăшă сăмах каларĕç, вăл пурăннă хваттерте музей уçма, хулари пĕр урама унăн ятне пама кирлине палăртрĕç. Çав кун мана та сăмах калама ирĕк пачĕç.

— Эпĕ те çак çуртра пурăннă. Питех те илемлĕччĕ Петр Николаевичпа тĕл пулса калаçма. Кашни каç тенĕ пекех вăл хăйĕн мăшăрĕпе Зинаида Федоровнăпа спектакльтен е концертран шăкăл-шăкăл калаçса килни халĕ те куç умĕнче. Тĕлĕнмелле лайăхчĕ Осиповпа пĕр çуртра пурăнма. Эпир унăн ырă сăпарне, халăхшăн тунă ырă ĕçне нихăçан та манмастпăр. Акă, вăл халĕ те В. П. Нагорнов скульптор тунă асăну хăми çинчен тăван Атăл çине, тăван Чăваш çĕршывĕ çине ырă кăмăлпа пăхса тăрать. Чыс та мухтав ăна, чăваш Улăпне! Тайма пуçăм сана, пирĕн хаклă юлташăмăр, тусăмăр Петр Николаевич Осипов! — терĕм.